Çын тата саккун

Харкашу эрехрен пуçланать

Епле илемлён курăнать тин çеç венчет çёрри тăхăнма ёлкёрнё мăшăр. Вёсен кун-çулё вёçсёр-хёрсёр телейпе тулли теийён. Анчах та çулсем кайнăçемён мăшăр хушшинче тёрлё харкашу тухать. Харкашу вара çапăçава та куçать. Шел пулин те çакă чылай çемьесенче тёл пулать.

Ильинка ял тăрăхёнчи Макаçи ялёнчи 43 çулхи Альберт Болеславович Пикусова кам е мён хётёртнё-ши 23 çулхи арăмё çине алă çёклеме? Арçын çамрăклах суд тенкелё çине ларма ёлкёрнё. Тёрлё статьясемпе айăпланăскерне 15 çул хушши ирёкрен хăтармалла тунă. Çак тапхăр çитмесёрех ăна йёплё пралук картинчен хăтарнă. Çапах та вăл унтан вăй-хала çăварлăхласах тухайман курăнать.

Ир-ирех арăмёпе хирёçӳ кăларать. Ана питёнчен темиçе хутчен çапать, мăйёнчен пăвать, вёлерессипе хăратать. Çакна хёрарăм чăнлăха илет, ăна явап тыттарма ыйтать.

Харкашу вара малтанхи каçхинех пуçланнă. Арăмё ирхине каçхи харкашу пирки аса илтернё. Çакă вара каялла аça-çиçём пулса таврăннă, арçынна картран кăларнă. Паллах, ёнерхи харкашу çинчен пуçарнă калаçу хёрарăма хёнесе вёлерессипе хăратас сăлтав мар пулё. Мăшăрсем хушшинчи асар-писер ача чун-чёринче тарăн суран хăварать. Пикусовсен çемйинче те икё çул тултарайман Роман ӳсет. Апла пулсан ăссăр арçыннăн паянхи пурнăç пирки кăна мар, ыранхи кун çинчен те шутламаллах ёнтё.

Çапах та малтанхи каç шăв-шав мёне пула тухнăха? 17 сехетсенче Макаçи ялёнчи А.Г. Григорьев Пикусовсен çуртне пынă. Икё арçын черкке хыççăн черкке ӳпёнтернё. Хаяр шёвек кăра çилёллёскерне алхастарсах янă, вăл çынлăха çухатнă, выльăхла хăтланнă. Акă çак тёслёх те эрех çемье телейён чăн-чăн тăшманё пулнине çирёплетет.

Çапла вара А.Б. Пикусов РФ УК 116 тата119 статьясен 1 пайёсемпе преступлени тăвать, çавна май ун тёлёшпе 9030 № уголовнăй ёç пуçарнă.

Н. ПУШКИНА, милицин аслă лейтенанчё, шалти ёçсен пайён дознани ушкăнён дознавателё.

Милици хроникинчен

Мён айăпа кёнё-ши?

Пирёнтен чылайăшёнче усал вăй хуçаланать тейён. Çынлăх, совеç ăнлавсем хăйсен пёлтерёшёсене пăрахăçласа пыраççё пулас. Юнашар çынна хёнеççё, кӳрентереççё, пусмăрлаççё, ыранхи кун пирки пачах шутлмаççё. Хăш чухне вара чавса çывăх пулсан та, ăна çыртмалла мар пулса тухать-çке. Шел пулин те çакăн пирки кайран тин ăнкарса илетпёр вёт.

Акă Ярославка ялёнчи Тёп урамра пурăнакан 28 çулхи арçын, чышкă çулăмне хăйёнпе çырăнман хёрарăмăн 20 çулхи хёр ачи çинче тёрёсленё.

Пӳтсёрсен (арçынсен) çынсăрлăхё вара вёçсёр-хёрсёр иккен, вёсем çамрăк ăрурине те, аслă ăрурине те шеллемеççё, тиркемеççё. Шомик ялёнчи Пошкар урамёнчи пёр çуртра пурăнакан 44 çулхи арçын алла тимёр витре тытать. Вăйне усăллă çёрте усă курайманран, çав витрепе 78 çулхи хуньямăшне пуçёнчен çапать.

Тури Кăпас ялёнчи Тури урамёнчи пёр çуртра пурăнакан 41 çулхи арçын 17 сехетре арăмёпе хирёçӳ кăларать. 43 çулхискерне тапса-çапса пётерет.

Çавăн пек тёслёх Хорнуй ялёнчи Сад урамёнче те тёл пулать. 19 сехетре 48 çулхи арçын хăйпе пёр çулхи арăмне çӳлерех асăннă меслетне хёнет. Пӳтсёр арçын хăтланăвё хёрарăма самай суранлатать. Çапла вара инкек тӳснёскерне тёп больницăн хирурги уйрăмне илсе çитерме тивет.

Çӳлерех асăннисем тёлёшпе уголовнăй майпа ёç пуçарас ыйту тăрать. Сăмахăма вара çапларах тăсас килет. Мёнпе айăпа кёнё-ши хёрарăмсем арçынсем умёнче е хăш çёршывра тата тапхăрта пурăнатпăр эпир паян? Хёрарăм та çынах, апла пулсан тивёç вăл çемье телейне туйма. Вăй питти çулсенчи арçынсен чышкисем хăйсенчен те çӳллё-ха, анчах та çулсем кайнăçемён усăнмёç-ши вёсем. Хăшён усăннă пулё те теприн вара 70 çул урлă каççан та çӳлтех иккен.

Акă ноябрён 30-мёшёнче Катькас ял тăрăхёнче хăрушă хыпар сарăлчё. Ассăрлăха пула-ши, пёр çуртра харăсах икё çын вилли вăхăт таппине чарса лартнă тейён. 73 çулхи арçын 70 çулхи арăмёпе урăх пурăнма пултарайман иккен. Çакăн пирки асатте çулёнчискер хăй вилес умёнхи çырура палăртнă.

Пӳрт çенёкёнче хёрарăмăн ытла та хăрушла амантса пётернё кёлетки выртнă, ăна 73 çулхи упăшка çёçёпе касса, тирсе сёмсёрлетнё. Арăмне вёлернё хыççăн хăй пӳртре çакăнса вилнё. Ав еплерех пулса тухать иккен пурнăçра, паллах, тарăхăва çийёнчех лăплантармасан тата çынлăха çухатсан. Çемье çавăрнă чухне вара пёрпёрне хисеплесе, ăнланса пурăнма тёв тăватпăр-çке. Нивушлё çакă самантлăха кăна?

Эрех çемье телейёнчен пахарах-и?

Эрех – çемье телейён тăшманё, харкашупа куççуль çăлкуçё. Эрех – ёçекенён тата юнашар çыннăн сывлăхне хавшатаканё. Ăна ёçме сёнекен, сутакан вара çыннăн телей çăмхине сӳтет, укçапа улăштарать. Эрех серепине лекнё, симёс çёлен черкки патне алла тăсаканăн хул пуççи çинче купăста пуçё тейён. Ырăпа усала уйăрма пёлмест.

Шалти ёçсен пайён ёçченёсем саккуна пăсса эрех сутакансем тата туянакансем тёлёшпе çирёп йёркепе ёçлеççё, ялсем тăрăх ятарлă рейда тухаççё. Çак ёçён ăнăçлăхё те куç кёрет.

Ноябрён 22-мёшёнче çӳлерех асăннă операцие ирттерекенсем ёçлё çул çӳреве Шатракасси ялне çитнё. Кунта вара 66 çулхи тăхлачă, Тёп урамра пурăнаканскер, 0,5 литр кёрекен савăтри эрехе 30 тенкёпе сённё.

Ноябрён 24-мёшёнче милици сотрудникёсем "Трасса-гараж" операци ирттернё май Тивёш ялёнче пулаççё. Унта вара Шупашкар урамёнчи 77 çулхи кинемейсутăça ёç вăхăтёнче тытма тӳр килет. Пенси укçи сахалтарах пек туйаннăран-ши, эрехпе сутă туса та пулин тёкё пултăр тенё пулас. Хăйсен ялёнчи 42 çулхи арçынна 0,250 литр кёрекен савăтри эрехе 30 тенкёпе сутнă.

Çак тăхлачăсем тёлёшпе халё милици сотрудникёсем ёçлеççё, явап тыттарасси пирки сăмахлаççё. Халăх каларăшёсем тёрёсех пулаканччё-ха. Эрех сутсах пуяймăн, çын куççулё çёре ӳкмест тенисем ыт ахалльтен калана сăмахсемех мар пулё.

Ан кай эсё "сунара"!

Ют пурлăха вăрлама кăнтăр çутинчен те, çын курасран та именместпёр. Ноябрён 21-мёшёнче 10 сехетре Катăкуй ялёнчи Тёп урамра 39 çулхи арçын "сунара" тухать. Пачах та мулкач, тилё тытма мар, ют пурлăха вăрлама. Тивёш ялёнчи "Колос" ООО АФ автомашина паркёнчи "Нива" комбайн çине улăхать. Унтан тёрлё пайсене кукăр аллипе çаклатса тухать. Çитес кёркунне тырă вырмасăрах пурăнăпăр тенё-ши? Анчах та кукăр çул вăрăм мар çав, ун йышшисем часах пакунлисен аллине лекеççё. Ку хутёнче те çаплах пулнă. Халё вара милици ёçченёсем тăкак хакне саплаштарасси тата РФ УК 158 ст. 1 пайёпе уголовнăй ёç пуçарасси пирки тёплён шутлаççё.

Пичете районти шалти ёçсен пайён материалёсем тăрăх хатёрленё.

Участница долевой собственности Бочкарева Мария Сергеевна, 01.01.1933 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, деревня Хоп-Кибер, улица Складская, дом 53, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения на территории СХПК "Хлебороб" в поле № 8 общей площадью 2,68 га., в том числе 2,48 га пашни.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 3 адреса:

1. Администрации Ильинского сельского поселения.

2. Бочкаревой Марии Сергеевне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, деревня Хоп-Кибер, улица Складская, дом 53.

3. Межрайонное отделение № 4 Управления Роснедвижимости ЧР, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, село Моргауши, улица Мира, дом 6.

Участница долевой собственности Копеева Светлана Геннадьевна, 12.05.1959 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, деревня Тренькино, улица Новая, дом 1, кв. 12, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения на территории СХПК "Хлебороб" в поле № 5 общей площадью 1,34 га.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 3 адреса:

1. Администрации Ильинского сельского поселения.

2. Копеевой Светлане Геннадьевне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, деревня Тренькино, улица Новая, дом 1, кв. 12.

3. Межрайонное отделение № 4 Управления Роснедвижимости ЧР, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, село Моргауши, улица Мира, дом 6.

Участник долевой собственности Копеев Юрий Сергеевич, 27.02.1952 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, деревня Тренькино, улица Новая, дом 1, кв. 12, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения на территории СХПК "Хлебороб" в поле № 5 общей площадью 1,34 га.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 3 адреса:

1. Администрации Ильинского сельского поселения.

2. Копееву Юрию Сергеевичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, деревня Тренькино, улица Новая, дом 1, кв. 12.

3. Межрайонное отделение № 4 Управления Роснедвижимости ЧР, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, село Моргауши, улица Мира, дом 6.

Тав тăватпăр

Çурлатри ялёнче пурăннă аттене, хуньстарике, асаттекукаçие Иван Егорович Петрова юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн Е. Андреев яч. хис. хуçалăха, Муркашри райпо, Муркашри тёп больница коллективёсене чёререн тав тăватпăр.

Тăванёсем.

Пёлтерӳсем. Объявления

СПУТНИКОВОЕ ТЕЛЕВИДЕНИЕ
8-927-666-93-95
От 3000 рублей. 2-5.

Продаю однокомнатную квартиру в с. Моргауши. Тел.: 8-905-345-84-00. 2-2.

УВАЖАЕМЫЕ ЖИТЕЛИ МОРГАУШСКОГО РАЙОНА!
КПКГ «Агрокредит» ждет вас по новому адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4. Тел.: 2-18-13. 7-10.

Продается кирпич: красный одинарный, красный полуторный пустотный М-125, одинарный половинки, силикатный, керамзит, гравмасса, керамзитобетонные блоки. Доставка. Тел.: 8-903-358-20-97, 44-20-97. 4-6.

Форд-транзит, 18 мест, обслуживание свадеб, экскурсии, перевозки по РФ. Тел.: 8-960-310-18-16. 3-5.

КАНДИДАТ МЕДИЦИНСКИХ НАУК СЕРГЕЕВ М.П.
Избавление от вредных привычек, пристрастие к алкоголю, курение, азартные игры.
Тел.: 8(22)37-33-29 (сотовый). 3-3.

ЗАО МСО «Моргаушская» требуются: электрик, электрогазосварщик, рабочие строительных специальностей. Оплата достойная и своевременная.
Реализуем цемент, песок строительный, раствор, бетон, керамзитобетонные блоки. Предоставляем транспортные услуги.
Адрес: Моргаушский район, д. Юнгапоси, ул. Ягодная, д. 21. Тел.: 32-2-23, 2-21-29. 3-3.

Халăхран лайăх хакпа вăкăр, тына, ёне ашăн тата чёрё виçепе пуçаратпăр. Тел.: 8-909-304-08-81, 68-5-89.

Куплю пух-перо старое и новое. Тел.: 8-903-379-01-23, 36-2-57.

ИП Баранов Э.И. продает строительные материалы: доски хвойные обрезные 6-метровые 50х120, 50х150, 50х200; брусья 100х100, 100х150, 150х150, цемент, шифер, рубероид 15 м. Обращаться в «Моргаушскагропромснаб» или по тел.: 8-903-346-40-58. 1-6.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на правах аренды земельный участок, для складирования инертных материалов, из земель сельскохозяйственного назначения, с кадастровым номером 21:17:03 01 01:0106, местоположение: участок находится примерно в 320 м по направлению на юго-восток от ориентира жилой дом, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Выселка Васильевка, ул. Главная, д. 12, площадью 6590 кв. м.

Заявления от граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободных земельных участков к распределению на правах аренды:

- земельный участок, для ведения личного подсобного хозяйства, из категории «земли сельскохозяйственного назначения», без права строительства на нем, с кадастровым номером 21:17:17 09 01:0444, местоположение: участок находится примерно в 497 м по направлению на восток от ориентира здание школы, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, д. Сятракасы, ул. Школьная, д. 17, площадью 5800 кв. м.

- земельный участок, для ведения личного подсобного хозяйства, из категории «земли сельскохозяйственного назначения», без права строительства на нем, с кадастровым номером 21:17:17 09 01:0443, местоположение: участок находится примерно в 493 м по направлению на юго-восток от ориентира здание школы, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, д. Сятракасы, ул. Школьная, д. 17, площадью 5900 кв. м.

- земельный участок, для ведения личного подсобного хозяйства, из категории «земли сельскохозяйственного назначения», без права строительства на нем, с кадастровым номером 21:17:17 09 01:0445, местоположение: участок находится примерно в 499 м по направлению на юг от ориентира здание школы, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, д. Сятракасы, ул. Школьная, д. 17, площадью 6500 кв. м.

Заявления от граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.

Администрация Моргаушского района выражает соболезнование Тарасовой Эльзе Леонидовне, председателю Моргаушского районного суда, по поводу кончины отца

ПУГАЧЕВА
Леонида Ивановича.

Моргаушский отдел Управления Федеральной регистрационной службы по Чувашской Республике выражает искреннее соболезнование председателю Моргаушского районного суда Чувашской Республики Тарасовой Эльзе Леонидовне в связи с тяжелой утратой – кончиной отца

ПУГАЧЕВА
Леонида Ивановича.

Нотариальный округ Моргаушского района Чувашской Республики глубоко скорбит председателю Моргаушского районного суда Чувашской Республики Тарасовой Эльзе Леонидовне по поводу безвременной кончины отца

ПУГАЧЕВА
Леонида Ивановича

и выражает искреннее соболезнование ее родным и близким.

ГУП ЧР "Моргаушский издательский дом"
Моргаушская районная газета
"ÇЁНТЕРӲ ЯЛАВЁ"

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики "Моргаушский издательский дом".

Директор-главный редактор
А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: **morpress@cbx.ru**

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу. Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 1,5 п. листа. Тираж 3823. Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулёпе».
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 07.12.2007 г.
Заказ
Дежурный по номеру БЕЛОВ А.П.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП "Моргаушский издательский дом", отпечатан (вкладыши - в ГУП "Моргаушский издательский дом") в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.